**Николай ГРИГОРЬЕВ**

# ЧУН ÇУТИ

## СССР халăх врачĕ Фирс Григорьев – сакăр вуннăра

Йĕри-тавра шап-шурă юр выртнă. Урамалла пăхакан чÿречесем çине хĕвел анаç енчи кĕрен çутă ÿкнĕ.

Анса пытанакан çавра пÿске пек хĕвел пысăккăн курăнать, шăнса чиперленнĕ кантăк тĕррисене хĕмлентерет.

Çĕнĕ çул умĕн пĕтĕм ял-йыш ырă кăмăлпа савăнса пурăнать. Хĕвел ансан ял хушшинчи кантăк çутисем те савăнăçлăрах çунаççĕ. Ача-пăча ял çумĕнчи тăвайккинче кĕшĕлтетет. Ши! шăхăраççĕ, кăшкăрашаççĕ, ахăлтатса кулаççĕ. Пĕрисем çунашкапа, теприсем йĕлтĕрпе çил хăвалаççĕ. Тĕттĕмленсен çеç сивĕре шăнса кÿтнĕскерсем шавласа та тулли телейпе çиçсе-ялкăшса килĕсене таврăнаççĕ.

Çак кунсенче Степановсен килйышĕ те савăннă. Савăнмасăр, Çĕнĕ çулсăр пуçне кунта Çĕнĕ çул каçĕнчи Хĕл мучин хаклă парни евĕр ача çураласса та хытă кĕтнĕ. Ача кĕтни пурне те йăпатнă, тăванĕсен чунĕсене лăплантарнă. Мĕншĕн тесен Степановсен çемйинче тинтерех çеç-ха виçĕ ачана — икĕ ывăла, Мишăпа Санькăна, тата Фаинăна — умлăн-хыçлăн пытарма лекнĕ. Ерекен чир çак ачасенчен пĕрне те шеллесе тăман. Кунашкал инкеке чăтса ирттерме никама та çăмăл мар.

Çапла, Степановсен çемйипе пĕрле тăван-пĕтен çеç мар, пĕтĕм ял-йыш ача çураласса кĕтнĕ.

Кĕтнĕ кун та çитнĕ. Çĕнĕ çул умĕн икĕ кун маларах — 1925 çулхи декабрĕн 29-мĕшĕнче — ир-ирех хĕвелпе пĕрле Чиркÿллĕ Шăхальти Кĕркури атте священникĕн юратнă арăмĕ Евгения Егоровна ывăл ача çуратать. Телейлĕ мăшăр ăна Фирс тесе ят хурать. Çĕр çине шăллĕ килнĕшĕн унтан кăшт аслăрах Ваня пичĕшĕ те питĕ хĕпĕртет.

Пĕчĕкскер, чăн та, кĕрнеклĕ те пур енчен сывлăхлă пулнă. Фирс, юмахри пек, кунпа мар, сехетрен ÿснĕ. Унпа пĕрле яланах юлташĕсем çÿреме тăрăшнă. Çичче кайсан вăл та шкула хатĕрленме пуçланă. Шел, çак вăхăталла çемьере каллех йывăрлăхсем сиксе тухаççĕ. 1932 çулхи мартăн 23-мĕшĕнче Фирс ашшĕне Григорий Степановича Чăваш Енри 23 священникпа пĕрле арестлесе Сиверски мăнастире ăсатаççĕ. Ашшĕне арестленĕ хыççăн темиçе кунтанах вĕсен килне 5-6 палламан çын пырса кĕрсе Степановсен çуртĕпе пĕтĕм пурлăхне конфискацилени çинчен пĕлтереççĕ, çурта васкавлăн пушатма ыйтаççĕ.

*— Палламан арçынсемпе пĕрле милиционерсем те пурччĕ, — çав куна аса илет халĕ Фирс Григорьевич. — Пиччепе иксĕмĕр хăраса ÿкрĕмĕр те аннене ыталаса илтĕмĕр. Анне те хытă хурланчĕ. Вăл влаçсем пирĕн кил-çурта конфискацилеме йышăнни çинчен пĕлнĕ-ха, анчах приговора çапла хăвăрт пурнăçа кĕртесси çинчен шутлама та пултарайман, кĕтмен те.*

*Анне йĕре-йĕре хваттер тупиччен пĕр-икĕ кун тăхтамашкăн тилмĕрсе ыйтрĕ. Анчах ăна никам та итлесшĕн пулмарĕ. Унтан анне чĕркуççи çине тăрсах ачасене апатлантарма тата тумтир тăхăнтарма ирĕк ыйтрĕ. «Виççĕшĕ те пĕчĕккĕçке-ха, çап-çара. Кун пек вĕсене урама, юр çине мĕнле илсе тухас?»*

*Пĕри те чĕнмерĕ. Çав хушăра анне сиксе тăчĕ те ухват илсе кăмакара пиçекен çĕр улми чугунне кăларма пикенчĕ. Ял Советĕнчен килнисенчен пĕри анне аллинчи ухвата тăпăлтарса илчĕ те айкинелле ывăтрĕ, хăйне тĕксе ячĕ. Çавăнтах урайĕнче ларакан витрене çĕклерĕ те пĕтĕм шывне çунакан кăмакана сапрĕ. Урса кайнăскер каллех анне çине сиксе ÿкрĕ, ăна урама кăларса вăркăнтарчĕ.*



*Эпир хăраса ÿкрĕмĕр. Пурте: «Ан-не!» — кăшкăртăмăр.*

*Кĕтмен «хăнасенчен» пĕри пире вăрçма тытăнчĕ: «Мĕн тăрататăр, шăшисем? Тухăр пÿртрен!»*

*Эпир тата хытăрах макăрма пуçларăмăр. Гришăпа иксĕмĕр хăранипе Ваня пичче çурăмĕ хыçне пытантăмăр. Халĕ ĕнтĕ лешсем пурте Ваньăна тапăнчĕç. Хăлхинчен туртрĕç, питĕнчен çапкалашрĕç, сăмсинчен юн кăларчĕç. Юлашкинчен пире виççĕмĕре те çара уранах шартлама урама кăларса ячĕç. Чи пĕчĕкки — пирĕн Гриша — йĕм те тăхăнма ĕлкĕреймерĕ.*

*Эпир макăрнине илтсе кÿршĕри Маня аппасем патĕнчен анне чупса каçрĕ, виççĕмĕре те вĕсен ăшă пÿртне çĕклесе кĕртрĕ...»*

Степановсен çуртĕнче ял Совечĕ вырнаçать.

Çурт хуçисем хăйсем, Евгения Егоровнăпа виçĕ ывăлĕ, ял урамĕсем тăрăх çăкăр татăкĕ ыйткаласа çÿреççĕ. Çĕр каçма та вырăн ыйтмалла. Талăкĕпе — ир те, каç та — канлĕх мĕнне пĕлмен ĕнтĕ. Мĕн тери терт-асап курман-ши вĕсем?

Григорий Степанович тĕрмерех

ларнă-ха. Часах тăван яла вăл йывăр чирлени, çывăх вăхăтра ăна киле ăсатасси çинчен хыпар çитнĕ. Кунашкал хыпар никама та савăнтарайман. Мĕншĕн тесен тĕрĕс-тĕкел çынна вăхăчĕ çитмесĕр тĕрмерен кăлармасса пурте ăнланнă.

Çак вăхăталла Степановсен çемйине пĕччен пурăнакан Симон аппа хăйсем патне хваттере янă. Ăшă та тирпейлĕ пӳрт пурне те килĕшнĕ.

Ашшĕ те нумай кĕттермен. Çемьере ăна пысăк савăнăçпа кĕтсе илнĕ. Вăйпитти арçынăн шăммипе тирĕ çеç юлнă пулнă, ура çинче те аран тăнă. Çапах та кусĕнче чун çути çиçсе вылянă. Симон аппа та ăна тăван ывăлĕ пекех кĕтсе илнĕ: кача-ка сĕчĕ ĕçтернĕ, тутлă çитернĕ. Григорий Степанович хăй те тĕрлĕ курăксемпе сипленме пуçланă. Çаксен усси хăвăртах палăрнă: икĕ уйăх та иртмен — Григорий Степанович ураланнă, чир-чĕре манса Ухман чиркĕвне священнике вырнаçнă.

*«Эх, анне чун-чĕри ун чухне ĕмĕтсемпе тулчĕ, — аса илет Фирс Григорьевич. — Вăл пирĕн атте халь-халь пĕр-пĕр пӳрт туянасса шанчĕ. Пурин те питĕ тумтир пуласса кĕтрĕ. Пурнăç çапла çаврăннăшăн эпир пурте телейлĕччĕ. Хамăр аттепе мăнаçлантăмăр, питĕ савăнтăмăр».*

*Чăн та,* пурнăçри малашлăх уçăмлăнах курăннă вĕсене. Пурте телейлĕ пулнă. Пурнăç тăршшĕнче мĕн пухнине веçех туртса илнĕ пулин те вĕсем ĕмĕтленнĕ, çутă ĕмĕтсемпе пурăннă...

1932 çулхи çуллахи пĕр кун Кĕркури аттене кӳршĕллĕ Елюккасси ялне ача ят хума чĕнеççĕ.

*«Атте ырă çынпа кирек кампа та тарават пулнă, — каласа парать Фирс Григорьевич. — Уйрăмах тĕнпе çыхăннă ĕçсенчен нихăçан та пăрăнман. Елюккассине ачана шыва кĕртме те кăмăлпа тухса кайрĕ. Унта ĕçсене вĕçлесен вăл каçа хирĕç киле килме тухнă. Çула ăсатакансене юлма хушнă. Кĕçĕн Çавал хĕрринче ăна вăрă-хурахсем кĕтсе тăнă-мĕн. Ылтăн хĕресне, хаклă япалисене туртса илнĕ те хăйне вĕлернĕ, кĕлеткине шыва путарнă...»*

Григорий Степановича ӳтне икĕ эрне иртсен çеç Кĕçĕн Çавалта тупнă. Çын вĕлеренсене милици пĕртте шыраман, священник вилĕмĕ çинчен вара усал сас-хура сарнă.

Инкек кунпа вĕçленмен-ха. Григорий Степановича пытарнă хыççăнах унăн çемйи пурăннă Симон аппа çуртне вут тивертсе çунтарса яраççĕ. Евгения Егоровнăпа виçĕ ывăлĕшĕн каллех çĕнĕ тĕреслевсем пуçланнă.

Часах хуйхă-суйхăпа чир-чĕре пула Евгения Егоровнăн икĕ куçĕ те пачах суккăрланса ларнă. Ниçта тухса çӳреймен амăшĕпе ачисене таса уйра хăр тăлăххăн юлнăнах туйăннă. Кил-çурчĕ те, çи-пуçĕ те, çиме çăкăр татăкĕ те пулман вĕсен. Виçĕ ывăл суккăр амăшĕ çумĕнче çуначĕсене касса татнă кайăк чĕпписем пек тыткаланă. Эх, мĕн тери пысăк хуйхă!

Чухăн çемьене ял-йыш хĕрхеннĕ. Çĕр каçма чарăннă çурта пĕрисем çăкăр чĕлли е çĕр улми, теприсем кивелнĕ тумтир илсе пынă. Кăнтăрла ачасем амăшне пĕччен хăварса килсем тăрăх ыйткаласа çӳренĕ. Çимелли-мĕн тупăнсанах амăшĕ патне чупса таврăннă, ăна апатлантарма васканă.

Çиччĕ тултарсан Фирс Шăхальти пуçламăш шкулти пĕрремĕш каласа кайнă.

*«Ывăлăмсем, арçын чăмаккисем, эсир те ӳссе пыратăр, — тетчĕ анне, — ăшшăн аса илет халĕ Фирс Григорьевич. — Эсир паян та манăн шанчăклă тĕревсем. Пире кăштах çеç тӳсĕм кирлĕ, вара эпир йĕркеллĕ пурнăçпа пурăнса кайăпăр.*

*Çынсене савăнăç кӳрĕр, ырă пулăр, инкеке лекнĕ çынсене пулăшма васкăр. Ял-йыш пире пăрахмарĕ, эсир те ан пăрахăр, ан манăр пире ырă тунине. Ун чухне эпир телейлĕ пулăпăр».*

Ачисем амăшне питĕ юратнă. Гриша шкула çӳреймен-ха. Ваня лайăх вĕреннĕ. Фирс киле куллен «питĕ лайăх» паллăсем кăна илсе килнĕ. Амăшĕ ачисен çитĕнĕвĕпе савăнмаллипех савăннă.

Калас пулать, Степановсен çемйине пурнăç çулĕ çинче нумай чухне ырă çынсем тĕл пулнă, мĕнле май килнĕ çапла пулăшнă.

*«Пĕррехинче эпир пирĕн урампа иртсе пыраттăмăр, — каласа панăччĕ Фирс Григорьевич. — Пирĕн пӳрт умĕнче анне чарăнса тăчĕ. «Ачасем, эпир кил умĕнче-и?» — ыйтрĕ анне.*

*— Пирĕн кил, — терĕмĕр эпир.*

*Вăл пире чарăнма, кăштах чĕнмесĕр тăма хушрĕ. Эпир анне-не итлерĕмĕр. Унтан вăл çине-çинех ыйтусем пама пуçларĕ: «Çурчĕ мĕнлерех курăнать? Чӳрече янаххисем çинче чечексем пур-и? Чӳрече каррисем еплерех?»*

*Кĕтмен çĕртенех эпир хамăра кантăкран тимлĕ сăнакан паллаксан арçынна асăрхарăмăр. «Çĕтĕкçурăк тăхăннă, çарран тăракан тата тулли михĕсем çакнă ачасене курма кăсăклă пуль», — шухăшларăм эпĕ. Çакăн çинчен аннене пĕлтертĕм. Вăл пире çурт умĕнчен хăвăртрах кайма, урам тăрăх малалла утма хушрĕ.*

*Çав вăхăтра леш арçын урама чупса тухрĕ те пире пӳрте, урăхла каласан, ял Советне кĕме чĕнчĕ. Анне ăна сассинченех палларĕ, вăл пирĕн аттен лайăх юлташĕ пулни çинчен каласа ăнлантарчĕ те хăйне киле çавăтса кĕме ыйтрĕ.*

*Анне пӳрте кĕрсенех пĕренесене хыпалама пикенчĕ. Вăл аттепе Ваньăн сăн ӳкерчĕкĕсен рамине шыранă-мĕн. Анчах çакăнса тăнă вырăнта вĕсем пулмарĕç.*

*Пирĕнпе паллашнă çын ял Совечĕн çĕнĕ председателĕ пулчĕ. Вăл анне хумханнине тӳрех ăнланчĕ, пире сĕтел хушшине ларма чĕнчĕ, чей сĕнчĕ. Ку сĕнӳпе эпир питĕ хĕпĕртерĕмĕр. Анчах анне хирĕçлерĕ. Эпир вара кайма вăхăт çитнине тавçăрса илтĕмĕр. Хăй умĕн ĕçленĕ пуçлăхсен тискерлĕхĕшĕн ял Совет председателĕ пирĕн аннерен каçару ыйтрĕ. «Евгения Егоровна, сирĕн пурнăç питĕ нушаллă пулнине ăнланатăп, — терĕ вăл. — Сире пулăшассăм килет, анчах пулăшмалли майсем манăн питĕ сахал. Сире эпĕ паянах хăвăрăн мунчана пурăнмашкăн куçма сĕнетĕп. Никама та ан итлĕр, акăш-макăш кун-*

*сем иртиччен пурăнăр унта. Çавăн пекех хăварăн çĕр лаптăкĕпе те усă курăр. Ыйтусем сиксе тухсан, ман пата пырăр».*

Çак сăмахсем аннен чунне ăшăтса янăн туйăнчĕç. Вăл председателе чĕререн тав турĕ. Эпир вара хамăр пысăк йышпа çĕнĕ пурнăç пуçлама пахчара ларакан пĕчĕкçĕ мунчана утрăмăр...»

Часах Фирс Григорьев Шăхальти пуçламăш, унтан Кăшнаруйри тулли мар вăтам шкулсене пĕтерет. Питĕ лайăх вĕреннĕшĕн тата хăйне йĕркеллĕ тытнăшăн ăна мухтав грамоти параççĕ.

1940 çулта Фирс Григорьевич амăшĕ сĕннипе Канашри педагогика училищине вĕренме кĕрет. Кунта вăл спортпа туслашать, чунĕпе музыка еннелле туртăнма пуçлать. Вĕренессе «питĕ лайăх» паллăсемпе кăна вĕренет. Фирс çитĕнĕвĕсемшĕн амăшĕ çав тери çунатланса пурăнать.

— *Вăталăх ывăл учитель пулать, — мăнаçланнă вăл. — Шалу укçипе хваттер туянăпăр, хамăрăн юратнă мунчана яланлăхах хăварăпăр. Ял-йыша та пулăшăпăр, çынсем умĕнче пысăк парăмра эпир.*

Шел, амăшĕн çавнашкал çутă ĕмĕчĕсем каллех ĕмĕтрех юлнă.

1941 çулхи июнĕн 22-мĕшĕнче Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçланнă. Евгения Егоровнăн аслă ывăлне Ваньăна тÿрех фронта илсе кайнă. Амăшĕшĕн канăçсăр кунсем пуçланнă. Мĕншĕн тесен Шăхале те кунсерен тенĕ пекех кам та пулин пуç хуни е хыпарсăр çухални çинчен хура хутсем килсех тăнă.

Тăшман Мускав патне çывхарса пынă. Ноябрь пуçламăшĕнче нимĕç самолечĕсем Чулхулари автозавода тата рабочисем пурăнакан çуртсене аркатма хăтланнă. Ноябрĕн 4-мĕшĕнче хура хĕреслĕ самолетсем Шупашкара та вĕçсе çитнĕ. Хула çине 22 бомба пăрахнă, икĕ çынна вĕлернĕ, вун саккăрăшне амантнă, халăх сучĕн çуртне сиенленĕ. Усал хыпарсем пĕтĕм халăха пăшăрхантарнă.

Ваня çырсах тăнă. Анчах 1943 çулта çырусем килме чарăннă. Юлашкинчен мартăн 25-мĕшĕнче Евгения Егоровна хăйĕн ячĕпе виçĕ кĕтеслĕ çыру илнĕ. Амăшĕ салтак çырăвне алăра ачашла-ачашла çухалсах кайнă. «Ваня çыру çырнă, апла тăк — пурăнать», — тенĕ вăл Фирса çырăва тыттарса.

Çырăва ют çын çырнине Фирс тÿрех тавçăрса илнĕ, анчах хăй иккĕленни çинчен амăшне каламан.

*«Дорогая, Евгения Егоровна, — вуланă Фирс, — пишет Вам командир части... Я с большим прискорбием извещаю Вас, что Ваш сын, Иван Григорьевич Григорьев, 13 марта 1943 года в жестоком бою за город Волчанск Харьковской области пал смертью храбрых.*

*Примите наше искреннее солдатское соболезнование. Мы — однополчане, склоняем голову перед Вашим сыном Ваней. Вы можете гордиться своим сыном. Он погиб, геройски защищая нашу любимую Родину.*

*Мы клянемся Вам — матери героя, отомстить врага за Вашего сына и за все злодеяния в нашей стране.*

*С нами Сталин!*

*Победа будет за нами!*

*Простите нас, что не сберегли Вашего сына.*

*Прощайте».*

*Алă пуснă. 15.03.1943 ç.*

Фирс йĕре-йĕре, куççуль витĕр вуланă çырăвне.

Амăшĕ ăна итлемен те иккен! Вăл «Ваня вилнĕ...» тенине илтсенех тăнне çухатнă. Телее, кравать çинче ларнă май, ÿксен те йывăр сусăрланман-мĕн.

Ывăлĕ амăшĕ патне чупса пынă: «Анне! Тархасшăн, ан вил!» Ыталанă ăна, пуçĕнчен ачашланă... Юлашкинчен тытăнчăклă сасă илтĕннĕ: «Фирс, шыв... шыв пар...»

Шыв ĕçнĕ хыççăн амăшĕ ывăлне ыталаса илнĕ: «Сана та фронта ăсатăп-ши вара? Çук! Я-мас-тăп!» Унтан аслă ывăлне Ваньăна аса илнĕ: «Ăçта эс, хаклă ывăлăм, ăçта? Суккăр аннÿне мĕншĕн пăрахса хăвартăн? Волчанск хули ăçта-ши вăл? Ăçта шырамалла-ши вилтăприне? Каçар, ывăлăм, каçар мана, Ваня...»

Уйăх та иртмест вĕсен мунчине Евгения Егоровнăн вăталăх ывăлне Фирса фронта каймашкăн повестка çитсе выртать. Сывпуллашма икĕ кун параççĕ.

*«Анне çине пăхма та йывăрччĕ, — аса илет Фирс Григорьевич. — Шутсăр хытă кулянчĕ. Апат та çимерĕ, çывăрмарĕ те. Питĕ начарланчĕ, вăйран кайрĕ. Икĕ кунта вунă çул чухлĕ ватăлса кайрĕ».*

Уйрăлнă чухне амăшĕ питĕ кĕскен каланă: «Ывăлăм, мана Ваня пек пăрахса ан хăвар. Часрах таврăн, чĕрĕ таврăн».

Çар эшалонĕ Канашран тухса Владимир еннелле çул тытнă. Горький хулинче приказ илнĕ: вакунсене пушатмалла, автозавод районне çитмелле. Нимĕç самолечĕсем завода тата рабочисем пурăнакан района тапăннă-мĕн: 280 çын вилнĕ, 500 ытла аманнă, ишĕлчĕксем айне пулнисем те йышлă. Заводăн пысăк корпусĕсене, пурăнмалли çуртсене аркатнă тăшман. Чăваш çамрăкĕсене ишĕлчĕксене тасатма, вилнисене тирпейлесе пытарма хушнă. Иртнĕ кунсенче вара нумайăшĕн ÿчĕсем çĕрсе çемçелме те ĕлкĕрнĕ.

*«Сывлăшра çĕрĕк шăршă-маршă тăратчĕ, — каласа парать Фирс Григорьевич. — Сывлама та май çукчĕ. Пĕтĕм пыршă çаврăнса пĕтĕрĕнетчĕ. Апат та çиейместĕмĕр, çывăраймасăр аптраттăмăр. Кăтăш пулсан та хăрушă тĕлĕксем тĕлленсе йĕпйĕпе тарласа вăранаттăмăр. Эх, турă! Питĕ начарланса кайрăмăр, вăйран ÿкрĕмĕр. Çавнашкал ларутăрура икĕ эрнене яхăн ĕçлерĕмĕр. Ишĕлчĕксене куçарса, вилнĕ çынсене тирпейлесе пытарсан пире Владимир хулине турттарса кайрĕç. Кунти командирсем эпир кÿршĕ республикăран килнĕ салтак ачисем пулнине те ĕненмерĕç, вĕсем пире тыткăна çакланнисем вырăнне йышăнчĕç. Вара пире питĕ лайăх кантарчĕç. Пĕр ĕçе те хутшăнтармарĕç. Çывăратпăр та çиетпĕр. Унта çар тумтирĕ тăхăнтарчĕç те çуранах Павлово-Посад хулине ăсатрĕç.*

*Кунта та ăнмарĕ. Çул çинче пирĕн валли апат-çимĕç тиенĕ лавсене вăрă-хурах çаратрĕ. Çапла вара пĕр эрне выçăллă-тутăллă утрăмăр, Владимирта пухнă вăй-хала веçех пĕтертĕмĕр.*

*Павлов-Посадра эпĕ снайперсен курсĕнчен вĕренсе тухрăм. Унтан Мускаври минометчиксемпе пулеметчиксен çар училищине ярса пăхрĕç, йывăрăшпа çӳллĕш çитменнине пула çарпа медицина комиссийĕ мана йышăнмарĕ, снайпер пулмах хамăр полка куçарчĕç... Каярахпа полкри духовой оркестра чĕнсе илчĕç. Часах 3 Белорусси фрончĕн пĕрлештернĕ оркестрне йышĕнчĕç те унта вăрçă вĕçлениччченех хĕсметре тăтăм. Юлашкинчен Минскра Çĕнтерӳ кунĕ ячĕпе ирттернĕ парада хутшăнтăм».*

Фирс Григорьевич тăван Шăхале, ашшĕ лартнă мунчана 1945 çулхи май вĕçĕнче таврăннă. Чуна хумхантаракан тĕлĕнмелле тĕлпулу кĕтнĕ салтака...

*«Мунча алăкне уçса пĕр утăм çеç турăм, анне кравать çинчен тăчĕ те ман еннелле ярса пусрĕ.*

*Фирс, эсĕ-и? — терĕ вăл. — Санăн утăмна, санăн сывлăшна тутăп.*

*Эпĕ ăна хытă-хытă ыталаса тытрăм. Çăмăлскере. Юратнăскере.*

*— Анне, эпĕ ку, Фирс, — тетĕп. — Эпĕ таврăнтăм. Чĕрĕ таврăнтăм. Эс хушнă пекех.*

*Анне те мана хытă-хытă ыталать. Куççульпех макăрать. Манăн çӳçе хыпалать, картлă-картлă пӳрнесемпе пите çупăрлать, хулпуççинчи пакунсене, кăкăр çинчи орден-медальсене сĕртĕнет. Тепĕр самантрах вăл шăнăр туртнă пек аллисемпе ман хулпуççиренçакăнать: «Ывăлăм, Фирс! Чуна çутă килчĕ! Эпĕ куратăп сана! Куратăп!»*

*Вăл каллех куççульпе макăрса ячĕ те шăппăн çеç пăшăлтатрĕ: «Фирс таврăнчĕ. Чĕрĕ таврăнчĕ. Манăн чуна та çутă килчĕ. Эпĕ куратăп ăна».*



**СССР халăх врачĕпе Ф.Г. Григорьевпа Н.Г. Григорьев профессор.**

Ку — чăнлăх. Мĕн тери телейлĕ тĕлпулу!

Çак кун Фирс Григорьевич икĕ хут телейлĕ пулнă. Пĕрремĕшĕ, фронтран тĕрĕс-тĕкел, сывă таврăннă, амăшĕпе тĕл пулнă; иккĕмĕшĕ, икĕ куçĕ те суккăрланнă амăшĕн чунне çутă кĕнĕ, 13 çултан çĕнĕрен курма пуçланă...

Вăхăт хăвăрт иртнĕ. 1945 çулхи кĕркунне Фирс Григорьевич тепĕр хут Канашри педучилищĕне вĕренме каять. Çулталăкран ăна хĕрлĕ дипломпа пĕтерет. Çамрăк специалист Чурачăк райĕçтăвкомĕн физкультурăпа спорт комитечĕн председателĕнче ĕçлет. Ĕçĕ те килĕшет ăна. Час-часах тĕрлĕ ăмăртусем йĕркелесе иртерет. Ялсенчи шкулсемпе клубсем çумĕнче спорт секцийĕсем уçать, туристсен похочĕсене çӳрет. Кĕске хушăрах районти çамрăксем хушшинче ырă ят çĕнсе илет.

1947 çулта Фирс Григорьевич Хусанти медицина институчĕн педиатри факультечĕн студенчĕ пулса тăрать. Институтра вĕреннĕ вăхăтра студентсен наука обществине хастар хутшăнать, институтри оркестрта трамбонпа ăста вылять. 1953 çулта вăл институтран хĕрлĕ дипломпа педиатра вĕренсе тухать. Амăшĕ йывăр чирленине пула ачапăча хирургийĕн кафедринче аспирантурăра вĕренме те килĕшмест, Чăваш Ене васкать. Республикăра сывлăх министерствинче вăл хăйне Шăхасан больницинче хирургра ĕçлемешкĕн çирĕплетме ыйтать. Унăн ыйтăвне тивĕçтереççĕ. Унпа пĕрле Шăхасана çамрăк арăмĕ Нина Федоровна та пырать. Вĕсем педиатри факультетĕнче пĕрле вĕреннĕ, улттăмĕш курсра пĕрлешнĕ.

Шăхасан больницинче çамрăк врачсене хваттер уйăрса пареççĕ. Çапла вара вун çичĕ çул мунчара выртса тăнă хыççăн Евгения Егоровна икĕ ывăлĕпе тата кинĕпе пĕрле хăтлă хваттерте пурăнма пуçлать.

Çамрăк врачсен кулленхи профессиллĕ ĕç пуçланать.

Фирс Григорьевич, паллах, хирург ĕçне хисепленĕ, юратнă. Вăл яланах М.Горькин: «Пурнăçри чи лайăх киленӳпе пысăк савăнăç — хăвна çынсене кирлĕ тата çывăх пулнине туйни», — тенĕ сăмахĕсене асра тытнă.

Темиçе уйăхран вăл хирург, травматолог, гинеколог, уролог ĕçĕсене алла илет. Кăткăс операцисем ăнăçлă иртерет. Юлташĕсем хушшинче те унăн ячĕ-сумĕ хăвăрт ӳссе пырать.

*«Район хирургĕнче тăваттăмĕш уйăх ĕçлеттĕм, — аса илет Фирс Григорьевич. — Каçхине киле çитнĕ-çитменех телефон шăнкăравĕ янăраса кайрĕ. «Ку — больницăран, теççĕ. Вутлантан пĕрремĕш класс ачине турттарса килчĕç. Йĕлтĕр туйи хырăмĕ витĕр тухнă. Ачи тăнне çухатман-ха...»*

*Больницăна каялла чупатăп. Йышăну уйрăмĕнче кушетка çинче пĕр çичĕ çулхи арçын ача выртать. Капельница лартнă. Сăнпичĕ шурса кайнă, çамки çинче*

*сивĕ тар, йынăшать, ним ыратни çинчен те каламасть. Тумтирĕ витĕр хырăмĕпе пилĕкĕ тĕлĕнче самаях вăрăм йĕлтĕр туйи кăнтарса тăрать.*

*Çакна пĕлтĕм: ача йĕлтĕрпе ярăннă. Сăрт çинчен аннă чухне вăл тункатана пырса çапăннă. Йĕлтĕр туйи тимĕр вĕçĕпе хырăма тăрăнса витĕрех тухнă.*

*Мĕн тумалла? Арçын ачана операци пӳлĕмне çĕклесе хăпартма хушатăп та çăвăнма чупатăп.*

*Кашни минут шутра-çке-ха. Акă арçын ача операци сĕтелĕ çинче хăяккăн выртать. Ăна çурăм çине выртармалла та — йĕлтĕр туйи кансĕрлет. Хăвăрт кăна больницăри слесаре чĕнтеретĕп. Вăл питĕ асăрханса йĕлтĕр туйине икĕ енчен те тирпейлĕн касса татрĕ. Арçын ачана тинех йĕркеллĕ тăсса вырттартăмăр. Наркоз парсан унăн вар-хырăм хăвăлне уçрăм. Мĕн чухлĕ юн юхса тулнă кунта! А чашăн ку пысăк çухату. Тĕплĕ çуса тасатрăмăр, юн патăмăр ăна. Йĕлтĕр туйине мĕнпур çурхахсенчен уйăрса кăларсан мĕнпур пыршăсенчи суррансене çĕлесе тухрăмăр, каллех тĕрлĕ шĕвексемпе çурăмăр...*

Арçын ача больницăра вăрах выртмарĕ. Киле кайнă чухне хăйĕн хырăмĕнчен касса кăларнă йĕлтĕр туйин юлашки татăкне мана парнелесе хăварчĕ».

Тăватă çул хирургра тата акушер-гинекологра ĕçленĕ хыççăн Чăваш АССР Сывлăх министрĕ В.Г.Ефимова Фирс Григорьевича Шăхасан больницин (каярахпа Канаш район тĕп больницин) тĕп врачĕ пулма уйăрса лартать. Çавăнпа пĕрлех вăл хирурги уйрăмне те ертсе пырать. Паллах, унăн ĕç калăпăшĕ палăрмалла ӳсет. Çамрăк тухтăр районта пурăнакансене медицина пулăшăвĕ парассине мĕнле те пулин лайăхрах йĕркелессишĕн тăрăшать. Вăл район пуçлăхĕсене больницăн çĕнĕ те хăватлă никĕсне хывма кирли çинчен каласа ăнлантарать.

Часах çĕнĕ больница комплексне тума Шăхасан çумĕнче 12 гектар çĕр уйăрса парать, проект институтĕнче чи малтан сиплев корпусĕн проектне хатĕрлеме пуçлаççĕ.

Канаш районĕ ун чухне республикăри чи пысăк районсенчен пĕри пулнă. 44 колхозпа совхозра 65,5 пин çын пурăннă. 146 шкулта 25 пин ача вĕреннĕ. Район çыннисем тĕп больницăра тата Сиккассипе Чарпуçри участок больницисенче 50 ытла фельдшерпа акушер пунктне çӳренĕ.

Шăхасанти больница комплексне тăвасси пĕтĕм республика ĕçĕ пулса тăнă. Фирс Григорьевич унти ĕçсене аслă прораб пекех пĕлсе ертсе пынă. 1973 çулта котельнăй, 190 вырăнлă 1-мĕш сиплев корпусĕ ĕçе кĕнĕ. Çĕнĕ корпусра пĕтĕмĕшле хирурги, травматологи, гинекологи, терапи уйрăмĕсем уçăлаççĕ. 120 вырăнлă 2-мĕш сиплев корпусне хута ярсан ача-пăча хирургийĕ, кардиологи, офтальмологи, ӳт-тирпе венерологи, инфекци уйрăмĕсем тата диагностикăпа пулăшу службисем ĕçлеме пуçлаççĕ.

1984 çулта Фирс Григорьев тăрăшнипе Сиккассипе Татмăшри участок больницисене ĕçе кĕртнĕ, районти поликлиника çуртне пысăклатнă. 1985 çулта ача çуратмалли çурт, 1990 çулта операци блокĕпе ренимаци уйрăмĕ, 1993 çулта ялти васкавлă пулăшу станцине уçнă. Больница комплексне сарса пынă май Ф.Г.Григорьев тĕп врач медицина ĕçченĕсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма пĕтĕм вăйне хурать. 1980 çултанпа больница çывăхĕнче 64 çемье пурăнмалли тăватă çурт, Татмăшра 12 хваттерлĕ çурт туса лартнă. Кун пекки пирĕн республикăри нихăш районта та нихăçан та пулман.

Канашсем медицинăра ку чухнехи меслетсемпе сиплессине аталантарас енĕпе те хастарлă пулнă. Кунта сывмар çынсене иглорефлексотерапи, психотерапи, лазер терапийĕ тата ытти енĕпе те сиплеççĕ.

Канаш районĕнче пирĕн республикăра чи малтан 7 колхозра ача çуратмалли çурт, сĕт-çу фермисемпе машина-трактор паркĕсенче 7 профилактори уçнă. Çакнашкал ĕçе 1985 çулхи февралĕн 7-мĕшĕнче СССР Сывлăх министерствин коллегийĕ (С.П.Буренков министр) ырланă, ăна пĕтĕм çĕршывĕпех сарма кирлине палăртнă.

Канаш район больницинче пуçласа çуралнă ырă пуçарусем çинчен çырса та пĕтереймĕн. Çакна палăртас килет: республикăра врач амбулаторийĕсем те чи малтан Канаш районĕнче ĕçе кĕнĕ. Вĕсем халĕ офиссем пулса тăчĕç.

Ырми-канми те ытарайми çын — Фирс Григорьевич Григорьев. 1965 çулта вăл Хусанти медицина институтĕнче «Опыт работы сельской районной больницы (Канашской Чувашской АССР) в новых условиях» темăпа кандидат диссертацийĕ, 1992 çулта «Социально-гигиенические аспекты оптимизации медицинской помощи населению сельских районов на примере автономных республик Волго-Вятского экономического региона Нечерноземной зоны РСФСР» темăпа доктор диссертацийĕ хӳтĕлет. Çĕршыври чи паллă институтсем, çав шутра Хусанти патшалăх мединститучĕпе В.И.Ленин ячĕллĕ врачсен пĕлĕвне ӳстермелли институт, Мускаври Н.А.Семашко ячĕллĕ социаллă гигиенăпа экологи тата сывлăха сыхлас ĕçе ертсе пымалли наукăпа тĕпчев институчĕ, Пензăри врачсен пĕлĕвне ӳстермелли институт тата ыттисем те, ăна хăйсем патне профессорта ĕçлемешкĕн йыхравланă. Анчах та Фирс Григорьевич чăваш халăхĕн ырлăхĕпе сывлăхĕшĕн вăй хума хамăр республикăрах юлнă.

Ф. Г. Григорьев институт пĕтернĕ хыççăн 52 çул пĕр улшăнмасăр Канаш район больницинче вăй хунă. Çав хушăра ялан-ялан общество ĕçĕнчи хастарлăхĕпе тата пуçарулăхĕпе палăрнă. 1960—1994 çулсенче вăл Канаш район Совечĕн депутачĕ, 1989—1991 çулсенче СССР халăх депутачĕ пулнă.

Фирс Григорьевичпа пĕтĕм чăваш халăхĕ мăнаçланать. Вăл — СССР халăх врачĕ, РСФСР тат ЧР тава тивĕçлĕ врачĕ. Ăна Ленин орденĕпе наградăланă, унăн ятне Чăваш АССР Ĕç Мухтавĕпе Паттăрлăхăн Хисеп Кĕнекине кĕртнĕ.

Кăçалхи декабрĕн 29-мĕшĕнче Фирс Григорьевич Григорьев сакăр вунă çул тултарать. Саламлатпăр!

С. ИГНАТЬЕВ сăн ӳкерчĕкĕ.